26-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 20 пус.

1945 июнь 10 вырсарникун 111(6962) №

Чӑваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем пӗрлешӗр!

ВКП(б) Обкомӗпе Шупашкар хула комитечӗн, ЧАССР Верховный Совечӗн тата Шупашкар хула Совечӗн хаҫачӗ



Ӗҫсынни депутачӗсен пайсовечӗсен исполкомӗсемпе ВКП(б) райкомӗсем тӑратнӑ тӑрӑх, вылӑх-чӗрлӗх ӗрчетмелли государство планне ӑнӑҫлӑ тултарнӑшӑн тата вылӑх-чӗрлӗх тухӑҫлӑхне ӳстернӗшӗн малта пыракан ҫак колхозсене республикӑри ХИСЕП ХӐМИ ҫине кӗртнӗ:

КРАСНОАРМЕЙСКИ РАЙОН ТӐРӐХ:

38. **«Чамыш» колхоз** (председателӗ **А. П. Павлов** юлташ, ферма заведующийӗ **В. М. Зайцев** юлташ) вылӑх-чӗрлӗх ӗрчетмелли плана лашасем енӗпе 125 процент, майракаллӑ шултӑра вылӑх енӗпе 123 процент, сыснасем енӗпе 187 процент, сурӑхсем енӗпе 156 процент тултарнӑ. Ҫамрӑк вылӑхсене пурне те сыхласа хӑварнӑ. Государствӑна ҫулталӑкшӑн аш-какай 88 процент, ҫӑмарта 50 процент, ҫӑм 64 процент панӑ.

39. **«12 лет Октября» колхоз** (председателӗ **А. А. Абрамов** юлташ, ферма заведующийӗ **И. А. Андреев** юлташ) вылӑх-чӗрлӗх ӗрчетмелли плана лашасем енӗпе 100 процент, майракаллӑ шултӑра вылӑх енӗпе 116 процент, сыснасем енӗпе 111 процент, сурӑхсем енӗпе 150 процент тултарнӑ. 23 ӗнерен 24 пӑру илнӗ.

40. **Потемкин ячӗпе тӑракан колхоз** (председателӗ **И. М. Максимов** юлташ, ферма заведующийӗ **Д. П. Петрова** юлташ) вылӑх-чӗрлӗх ӗрчетмелли плана майракаллӑ шултӑра вылӑхсем енӗпе 141 процент, сыснасем енӗпе 135 процент, сурӑхсем енӗпе 221 процент тултарнӑ. Государствӑна ҫулталӑкшӑн аш-какай 60 процент, ҫӑмарта 89 процент панӑ.

Ирхи ҫӗртме — вӑйлӑ тырпул никӗсӗ

Уйхир ӗҫӗсене кӗске вӑхӑтра тата лайӑх туса ирттересси ялхуҫалӑхӗн ҫирӗп законӗ пулса тӑрать. Ҫакӑ вӑл суракки тӑвас, калчасене ҫумласа тасатас, тырпула вӑхӑтра пухса кӗртес ӗҫре кӑна мар, ҫӗртме тӑвас ӗҫре те калама ҫук пысӑк вырӑн йышӑнать.

Чӑваш АССР Совнаркомӗпе ВКП(б) Обкомӗн бюровӗ хура ҫӗртме сухине июнӗн 1-мӗшӗнчен кая юлмасӑр, клевер хӑй ҫӗртме пуссине июлӗн 15-мӗшӗнчен кая юлмасӑр, викӑпа сӗлӗ акнӑ хирсене июлӗн 20-мӗшӗнчен кая юлмасӑр сухалама хушрӗ.

Тӳрех калас пулать, ҫак кӑтартӑва хӑшпӗр районсенче пурнӑҫа кӗртсе пымаҫҫӗ-ха. Июнӗн 5-мӗшӗ тӗлне Муркаш районӗ мӗнпурӗ те 310 гектар кӑна, Калинино районӗ 500 гектар кӑна ҫӗртме тунӑ. Ку районсенче суракки ӗҫӗсем тахҫанах вӗҫленнӗ пулин те, нумай колхозсем ҫӗртме тума халӗ те тытӑнман. ВКП(б) райкомӗсемпе райисполкомсем ҫак ӗҫе тивӗҫлипе хакламан. Ҫавӑнпа та парти Обкомӗн бюровӗ Калинино райкомӗн секретарьне Никитин юлташа тата Муркаш райкомӗн секретарьне Ильин юлташа ҫӗртме тӑвас ӗҫе хӑвӑртлатас тӗлӗшпе халех васкавлӑ мерӑсем йышӑнма хушса хӑварчӗ.

Малта пыракан колхозсен опычӗ ҫӗртме сухине ирттерех туни тырпул тухӑҫлӑхне ӳстермелли чи пахи мероприятисенчен пӗри пулса тӑнине ҫирӗплетсе парать. Вӑрнар районӗнчи колхозсем ҫӗртме тӑвас ӗҫе ялан суракине вӗҫленӗ хыҫҫӑнах тытӑнаҫҫӗ. Ҫак районти «Победа» колхоз юлашки 5—6 ҫул хушшинче тырпул тухӑҫлӑхне икӗ хут ытла ӳстернӗ. Колхоз председателӗ Андреев юлташ каланӑ тӑрӑх, вӗсен колхозӗ ирхи ҫӗртмене лайӑх тунӑ лаптӑксенчен, ытти вырӑнсемпе танлаштарсан, гектартан 6—7 центнер ытларах тӗштырӑ пухса илнӗ. Ҫакӑн пек тӗслӗхсене Ҫӗрпӳ районӗнчи «Ӗмӗт», Елчӗк районӗнчи Ворошилов ячӗпе тӑракан тата ытти колхозсенче те курма пулать.

Ирттерех ҫӗртме туни ака ӗҫне хӑвӑртлатас тата ҫумкурӑкӗсемпе кӗрешес ӗҫре те пысӑк усӑ парать. Ҫӗртмене ирттерех тата лайӑхрах туни тӑпрара ытларах нӳрлӗх сыхласа хӑварма пулӑшать. Ҫӗртме пуссине тислӗк тата ытти удобренисем тӑкни, тарӑнрах сухалани тӑпран ҫиелти сийне лайӑхлатмалли майсенчен пӗри пулса тӑрать.

Ҫӗртме усси ытларах пултӑр тесен, ӑна ҫумкурӑкӗсенчен тасатса, вӑхӑтран вӑхӑта культиваторсемпе, сӳресемпе кӑпкалатса тӑни кирлӗ. Иртнӗ ҫул Комсомольски районри Урмаел ял Советне кӗрекен колхозсен ҫӗртме пуссине пӗтӗмпех арӑмути тата мӑян пусса илнӗччӗ. Кунта ҫӗртме тунӑ та ун ҫинчен ырӑш акма тухиччене манса кайнӑ. Урмаел ял Советӗнчи колхозсем начар тырпул туса илни ҫакӑнтан та нумай килет. Кун пек колхозсем Первомайски, Шӑмӑршӑ тата ытти районсенче те пур.

Ҫӗртме пуссине тислӗк тата ытти удобренисем тӑкса ҫемҫетме тӑрӑшмалла. Красноармейски районри «Победа» колхоз кӑҫал суракине вӗҫленӗ хыҫҫӑн ҫӗртме пуссине 1000 лава яхӑн тислӗк кӑларнӑ. Кунта колхоз тата колхозниксен килкартисенчен кӑна мар, районри учрежденисемпе предприятисен картишӗсенчен те ҫӗршер лав тислӗк турттарса, ҫӗртме пуссине тӑкнӑ. Тислӗке ана ҫине салатса пӑрахсанах сухаласа пына. Ҫӗртме тӑвас ӗҫе те кунта ҫак кунсенчех вӗҫлеҫҫӗ. Анчах та ҫӗртме пуссине тислӗк тата ытти удобренисем тӑкас ӗҫе хисеплемен колхозсем те пур-ха. Хӑшпӗр колхозсем тислӗке хире кӑларса купана хураҫҫӗ те, вӑл вара унта 2—3 ҫул хушши выртать. Шӑмӑршӑ районӗнчи «Светлый путь» колхозра хире кӑларнӑ тислӗк кунисене темиҫе ҫул хушши «ҫӗртсе» вырттарнӑ. Комсомольски районри «Культура» колхозра та тислӗкпе усӑ курассине хакламаҫҫӗ, колхоз правленийӗ умӗнчи сыпмава тислӗке лавӗ-лавӗпе тӑкаҫҫӗ. Ҫакӑ вӑл — сиенлӗ йӑла. Тислӗк пӗтӗмпех хире тухмалла. Ӑна вӑхӑтра салатмалла тата салатпа хыҫҫӑнах сухаласа пӑрахмалла.

Ҫӗртме тӑвас ӗҫре колхозсене МТС-сем тивӗҫлипе пулӑшмалла. Нумай МТС-сем ҫӗртме тӑвас ӗҫе суракине вӗҫленӗ хыҫҫӑнах пуҫӑнчӗҫ. Ку енӗпе Ишлей, Вӑрнар, Кусланкка тата ытти МТС-сем малта пыраҫҫӗ. Вӗсем хӑйсен ҫӗртме тумалли планне 20—30 процент таран тултарнӑ. Вӑрнар МТС-ӗ 1300 гектар ытла ҫӗртме тунӑ. Анчах та республикӑри нумай МТС-сем ҫӗртме ӗҫне пуҫӑнма тӑхтаса тӑраҫҫӗ. Суракки планне ӑнӑҫлӑ тултарнӑ Канаш, Комсомольски, Вӑрмар, Чкаловски, Елчӗк тата ытти хӑшпӗр МТС-сем те ҫӗртме тума васкамаҫҫӗ. Кашни МТС-ӑн суракки ӗҫӗсенчен пушаннӑ тракторсене ҫийӗнчех ҫӗртме тӑвас ӗҫе ямалла. Ҫӗртме тунӑ ҫӗрте те, суракки вӑхӑтӗнчи пекех, трактористсемпе трактористкӑсем плана срокчен тултарассишӗн, кашни сменӑра кашни тракторпа 600 минутран кая мар ӗҫлессишӗн ӑмӑртса ӗҫлемелле.

Кӑҫал суракки вӑхӑтӗнче пирӗн колхозсем 10.000 ытла ӗне-вылӑхсемпе ӗҫлерӗҫ. Ҫак ӗне-вӑкӑрсемпе ҫӗртме пуссине тислӗк турттарас тата ҫӗртме тӑвас ӗҫре туллин усӑ курмалла.

Ҫӗртме тӑвас тӗлӗшпе кашни района, колхоза тата бригадӑна график туса панӑ. Ҫав графика тӗрӗс те пӗр пӑркаланмасӑр пурнӑҫа кӗртсе пымалла. Ҫавӑнпа та мӗнпур туртӑм тата ӗҫ вӑйӗпе усӑ курмалла. Колхоз председателӗсем, бригадирсем тата пахалӑх инспекторӗсем кашни сухаҫӑн, трактористӑн ӗҫ пахалӑхне тӗрӗслесе тӑмалла. Ӑшӑх тата шӑйрӑк сухаланӑ вырӑнсене йышӑнмалла мар.

Кӑҫал ҫӗртме сухине вӑхӑтра тума пирӗн пур условисем те ҫителӗклӗ. Кашни колхозрах ҫӗртме тӑвас ӗҫе колхозниксемпе колхозницӑсене йышлӑн мобилизацилемелле. Ҫӗртме тумалли плана ӑнӑҫлӑн пурнӑҫласа, вӑйлӑ тырпул никӗсне хывса хӑвармалла.

ВКП(б) Обкомӗнче

Калинино, Муркаш тата Октябрьски районсенчи колхозсенче ҫӗртме тӑвас ӗҫ мӗнле пыни ҫинчен

Ҫак кунсенче ВКП(б) Чӑваш Обкомӗн бюровӗ «Чӑваш республикинчи колхозсенче ҫӗртме тӑвасси ҫинчен» Чӑваш АССР Совнаркомӗпе ВКП(б) Обкомӗн бюровӗ йышӑннӑ постановление мӗнле пурнӑҫласа пыни ҫинчен партин Калинино, Муркаш тата Октябрьски райкомӗсен секретарӗсем каласа панине итлерӗ.

ВКП(б) Обкомӗн бюровӗ ҫакна палӑртрӗ: ҫав районсенче ҫӗртме тӑвас ӗҫ начар пырать. Июнӗн 5-мӗшӗ тӗлне Калинино районӗнче 500 гектар (планӑн 8.6 процентӗ чухлӗ), Муркаш районӗнче 310 гектар (5.5 процент), Октябрьски районра 1.627 гектар (23 процент) ҫеҫ сухаланӑ. Ҫӗртме тумалли пилӗккунлӑх графика ҫав районсем халӗ те пурнӑҫламаҫҫӗ. Колхозсем ҫурхи тырӑсене акса пӗтернӗ пулин те, ӗҫ вылӑхне ҫӗртме тӑвас ӗҫе яман. Муркаш районӗнчи Йӳҫкасси, Матьӑк, Панкли, Муркаш тата ытти ял Совечӗсене кӗрекен колхозсенче ҫӗртме тумаҫҫӗ, лашасемпе унта колхозниксем хӑйсен пахчисенче тата ытти ӗҫсенче усӑ кураҫҫӗ. Октябрьски районра 27 колхоз ҫӗртме тума пуҫламан та. Калинино районӗнче лашапа 130 гектар ҫеҫ сухаланӑ, 61 колхозран 26-шӗ ҫеҫ ҫӗртме тума пуҫланӑ. Ҫӗртме тумалли участоксене тислӗк тата вырӑнти ытти тӗрлӗ удобренисем турттарас ӗҫе организацилемен, колхозниксен килӗсенчи тислӗке хире турттармаҫҫӗ.

Ҫав районсенче ҫӗртме тӑвас ӗҫ начар пыни—кӗрхи тырӑсене ытларах туса илес ӗҫре вӑхӑтра ҫӗртме туни пысӑк вырӑн йышӑнса тӑнине ВКП(б) райкомӗсем ҫителӗклӗ хакламаннинчен килет.

Ҫав районсен руководителӗсем, колхозниксене часрах ҫӗртме туса пӗтерме мобилизацилес вырӑнне, ҫӗртме тума тухиччен канса илмелли сиенлӗ йӑлана тытса пыраҫҫӗ.

ВКП(б) Обкомӗн бюровӗ партин Калинино райкомӗн секретарьне Никитин юлташа, Муркаш райкомӗн секретарьне Ильин юлташа, Октябрьски райкомӗн секретарьне Алексеев юлташа ҫӗртмепе вӑхӑтра тӑвас ӗҫе ҫителӗклӗ хакламанни киревсӗр ӗҫ пулнине кӑтартса панӑ. ВКП(б) Калинино райкомӗн секретарӗ Никитин юлташ тата Октябрьски райкомӗн секретарӗ Алексеев юлташ июнӗн 15-мӗшӗ тӗлне ҫӗртме тумалли графика пурнӑҫлатпӑр тесе сӑмах панине ВКП(б) Обкомӗн бюровӗ шута илнӗ.

ВКП(б) Обкомӗн бюровӗ партин райкомӗсен секретарӗсене МТС-сен мӗнпур тракторӗсене тата Чӑваш АССР Совнаркомӗпе ВКП(б) Обкомӗн бюровӗ кӑтартса панӑ сроксенче ҫӗртме туса пӗтермелӗх лашасем уйӑрса пама хушнӑ.

ҪӖРТМЕ ТУМА ВАСКАМАҪҪӖ

ЙӖПРЕҪ. (Телефонпа). Ҫуракине вӗҫленӗ хыҫҫӑнах «Трудовик» колхоз ҫӗртме тума тытӑнчӗ. Ҫак колхоз план тӑрӑх 115 гектар ҫӗртме тумалла, кунта 95 гектар ытла сухаланӑ. «Победа» колхоз та ҫӗртме тумалли плана 35 процента яхӑн тултарнӑ. Анчах та районра пур колхозсем те ҫакӑн пек ӗҫлемеҫҫӗ-ха.

— Лашасем пӑртак канччӑр-ха, ӗлкӗрӗпӗр,—тесе калаҫнине чылай колхозсенче илтме пулать. «Большевик», «Красный партизан» колхозсем суракине вӗҫленӗренпе 10 кун ытла иртнӗ, апла пулин те вӗсем ҫӗртме тума тытӑнман. Ҫак колхозсенче уя тислӗк турттарас тӗлӗшпе те нимӗн те тумаҫҫӗ.

П. КУРАКОВ.

* * *

ХӖРЛӖ ЧУТАЙ, июнӗн 8-мӗшӗ. (Телефонпа). Районри колхозсем ҫӗртме тӑвас ӗҫе ытла та сӳрӗккӗн тытӑнаҫҫӗ. Паянхи куна ҫӗртме тума пурӗ те 5 колхоз кӑна тытӑннӑ.

Хӑшпӗр колхоз руководителӗсем ҫӗртме тӑвас ӗҫе хакламаҫҫӗ. ВКП(б) ячӗпе тӑракан колхоз (председателӗ Чернов) суракки ӗҫӗсене вӗҫленӗренпе чылай вӑхӑт иртрӗ, анчах вӑл ҫӗртме тума халӗ те тытӑнман. Ҫавӑн пекех Ворошилов ячӗпе тӑракан колхоз та ку ӗҫре юлса пырать. Колхоз председателӗ Осипов юлташ ҫӗртме тӑвас ӗҫе хӑй чӑрмантарать. Вӑл сухари лашасене урӑх ӗҫсене ярать. Ҫак кунсенче вӑл хӑй ирӗкӗпе леспромхоз директорне Пятницын юлташа килне валли вутӑ турттарма икӗ лаша панӑ.

Колхозсем ҫӗртме пуссине тислӗк кӑларас енӗпе те начар ӗҫлеҫҫӗ. Районри 66 колхозран пӗри те тислӗк кӑлармалли плана тултарайман.

П. ТИХОНОВ.

Пахчаҫимӗҫ лартаҫҫӗ

ҪӖРПӲ. Чылай колхозсенче пахчаҫимӗҫсем лартма пуҫланӑ. «Пионер» колхоз сухан, кишӗр, хӗрлӗ кӑшман, ҫарӑк тата ытти тӗрлӗ пахчаҫимӗҫе пурӗ 4 гектар лартнӑ, ҫитес кунсенче 2 гектар хӑяр акма хатӗрленет.

«Красные Тиуши» колхозра та пахчаҫимӗҫ бригади пӗр гектар хӗрлӗ кӑшман, кишӗр лартнӑ.

А. ИВАНОВ.

РСФСР-ӑн 1-мӗш созыври Верховный Совечӗн VI-мӗш Сессийӗ

РСФСР-ӑн 1-мӗш созыври Верховный Совечӗн VI-мӗш Сессийӗн 1945 ҫулхи июнӗн 8-мӗшӗнче пулса иртнӗ ларӑвӗ ҫинчен

ИНФОРМАЦИЛЛӖ ПӖЛТЕРӲ

Июнӗн 8-мӗшӗнче, кӑнтӑрла иртсен пӗр сехетре, Кремльти Аслӑ Дворецра РСФСР Верховный Совечӗн VI-мӗш сессийӗн 5-мӗш ларӑвӗ пулса иртнӗ.

Ларӑва РСФСР Верховный Совечӗн Председателӗ **А. А. Жданов** депутат председатель пулса ертсе пынӑ.

Пренире РСФСР-ӑн 1945 ҫулхи государство бюджечӗ ҫинчен тунӑ доклад тӑрӑх **В. П. Пронин** депутат сӑмах тухса каланӑ.

Ҫакӑнпа кун йӗркинчи пӗрремӗш ыйту тӑрӑх пренисем пӗтнӗ. Вара РСФСР Верховный Совечӗ докладчикӑн — РСФСР Финанс Халӑх Комиссарӗн **А. А. Посконов** юлташӑн тата содокладчикӑн—РСФСР Верховный Совечӗн Бюджет комиссийӗн председателӗ **И. А. Власов** депутатӑн юлашки сӑмахӗсене итленӗ.

РСФСР Верховный Совечӗ, пӗрсаслӑ пулса, РСФСР-ӑн 1945 ҫулхи государство бюджетне ҫирӗплетнӗ. Статьясем тӑрӑх, унтан пӗтӗмӗшпе илсе, РСФСР Верховный Совечӗ «Российӑн Советлӑ Федерацийӗ Социализмлӑ Республикин 1945 ҫулхи государство бюджечӗ ҫинчен калакан закона» пӗрсаслӑн ҫирӗплетнӗ.

РСФСР Верховный Совечӗ кун йӗркинчи иккӗмӗш ыйтӑва—РСФСР Верховный Совет Президиумӗн Указӗсене ҫирӗплетес пирки сӳтсе-явма тытӑннӑ.

А. А. Жданов юлташ РСФСР Верховный Совет Президиумӗн Председательне **Н. М. Шверник** юлташа сӑмах панӑ.

Шверник юлташ ҫапла калать: **И. С. Хохлов** юлташ Отечественнӑй вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче Хӗрлӗ Ҫарти ертсе пымалли ӗҫе куҫрӗ, ҫавӑнпа та РСФСР Верховный Совечӗн Президиумӗ, Указ кӑларса, **И. С. Хохлов** юлташа РСФСР Совнарком Председателӗн ӗҫӗсенчен хӑтарчӗ. РСФСР Верховный Совечӗн Президиумӗ ҫавӑнпа пӗр вӑхӑтрах РСФСР Совнаркомӗн Председателӗ пулма Алексей Николаевич **Косыгин** юлташа лартрӗ.

Шверник юлташ малалла ҫапла калать: **Косыгин** юлташа РСФСР Верховный Совечӗн депутачӗсем тата пирӗн республикӑри ӗҫсыннисем лайӑх пӗлеҫҫӗ. Президиум **Косыгин** юлташа Халӑх Комиссарӗсен Совечӗн Председателӗ пулма тивӗҫлӗ кандидат тесе шутлать.

Шверник юлташ сӗннипе Верховный Совет **И. С. Хохлов** юлташа, вӑл Хӗрлӗ Ҫарти ӗҫе куҫнӑ пирки, РСФСР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗн Председателӗн ӗҫӗсенчен хӑтарасси ҫинчен постановлени йышӑнать.

Унтан РСФСР Верховный Совечӗ, пӗрсаслӑ пулса, Алексей Николаевич **Косыгин** юлташа РСФСР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗн Председателӗ пулма ҫирӗплетесси ҫинчен постановлени йышӑнать.

Председатель РСФСР Верховный Совет Президиумӗн Указӗсене ҫирӗплетесси ҫинчен доклад тума сӑмах РСФСР Верховный Совет Президиумӗн Секретарьне **П. В. Бахмуров** депутата парать.

РСФСР Верховный Совечӗ, пӗрсаслӑ пулса, РСФСР Верховный Совет Президиумӗн ҫак Указӗсене ҫирӗплетет:

«Анатолий Иосифович **Лаврентьев** юлташа РСФСР Ют ҫӗршыв ӗҫӗсен Халӑх Комиссарӗ пулма лартасси ҫинчен»;

«РСФСР-ӑн авлану, ҫемье тата опека ҫинчен калакан законӗсен Кодексне тата РСФСР-ӑн Граждански Процессуальнӑй Кодексне улӑштарасси ҫинчен» калакан Указсене, СССР Верховный Совет Президиумӗн 1944 ҫулхи июлӗн 8-мӗшӗнчи, 1944 ҫулхи ноябрӗн 10-мӗшӗнчи тата 1945 ҫулхи мартӑн 14-мӗшӗнчи Указӗсемпе килӗштерсе йышӑннӑскерсене;

«РСФСР-ӑн авлану, ҫемье тата опека ҫинчен калакан законӗсен Кодексӗн 60-мӗшпе 63-мӗш статьисене улӑштарасси ҫинчен»;

«РСФСР-ӑн Граждански Процессуальнӑй Кодексӗн 11-мӗш, 35-мӗш, 43-мӗш статьисене улӑштарасси ҫинчен тата 200-мӗш статьине пӑрахӑҫа кӑларасси ҫинчен».

Верховный Совет «РСФСР-ӑн Граждански ҫуртйӗр строительствин республикӑри Халӑх Комиссариатне тӑвасси ҫинчен калакан закона» йышӑнать.

Ларӑва председатель пулса ертсе пынӑ РСФСР Верховный Совет Председателӗ **А. А. Жданов** юлташ ҫапла калать: VI-мӗш сесси кун йӗркинчи ыйтусене пурне те пӑхса тухнӑ, сесси хупӑнчӗ.

Шкулсене ҫӗнӗ вӗренӳ ҫулне хатӗрлесси

РСФСР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ пуҫламӑш, ҫичӗ ҫул вӗренмелли тата вӑтам шкулсене ҫӗнӗ вӗренӳ ҫулне хатӗрлес ыйтӑва сӳтсе-явнӑ. Совнарком шкулсемпе ҫутӗҫ пайӗсен ӗҫӗсенче чылай ҫитӗнӳсем пуррине палӑртнӑ: вӗрентес ӗҫӗн пахалӑхӗ лайӑхланнӑ, ҫичӗ ҫулхи ачасене вӗренӳ ӗҫне хутшӑнтарнӑ.

Ҫакӑнпа пӗрлех Совнарком пысӑк ҫитменлӗхсем пуррине те палӑртса хӑварнӑ. Хӑшпӗр вырӑнсенче обязательнӑй йӗркепе пурне те хут вӗрентесси ҫинчен калакан закона пурнӑҫламаҫҫӗ, шкул ҫурчӗсем вӗренӳ ӗҫне юрӑхлӑ мар, шкулсенче кирлӗ таран хатӗрсем пулман тата вутӑ вӑхӑтра ҫителӗклӗ паман.

Шкулсене ҫӗнӗ вӗренӳ ҫулӗ тӗлне хатӗрлес тӗлӗшпе РСФСР Совнаркомӗ автономиллӗ республикӑсен Совнаркомӗсемпе облаҫсемпе крайсен тата тӳррӗмӗнех республикӑна пӑхӑнса тӑракан хуласен исполкомӗсене июнь—июль уйӑхӗсенче ҫичӗ ҫултан пуҫласа 15 ҫула ҫитнӗ ачасене шута илме хушнӑ.

Вӗренӳ ҫулӗ пуҫланнӑ тӗле шкулсене юсаса ҫитермелле, ҫулталӑкра кирлӗ мӗнпур вутӑн ҫурринчен кая мар турттарса пымалла. СССР Совнаркомӗ ирӗк памасан, урӑх учрежденисем йышӑннӑ шкул ҫурчӗсене 1945 ҫулхи августӑн 1-мӗшӗ тӗлне пурне те пушатмалла. Шкулсем занятисене пуҫлама хатӗррине пӑхса тухас тӗлӗшпе хуласемпе районсенче комиссисем тумалла.

Учительсен пӗлӗвне хӑпартас шутпа ҫулла уйӑхлӑх курссем организацилемелле: районсенче—пӗрремӗшпе тӑваттӑмӗш классенче вӗрентекен учительсем валли, облаҫсенче — ҫиччӗмӗш классенче вӗрентекен учительсем валли. Августӑн 7-мӗшӗнче шкулсенчи вӗренӳ ӗҫне лайӑхлатас тӗлӗшпе халӑха ҫутта кӑларас енӗпе ӗҫлекен работниксен пӗтӗм Российӑри канашлӑвне пухма йышӑннӑ. Вӗренӳ ҫулӗ пуҫланас умӗн учительсен облаҫсенчи тата районсенчи канашлӑвӗсем пулса иртмелле.

РСФСР Совнаркомӗ йышӑннӑ тӑрӑх, шкул ачисене учебниксем, вӗренӳ хатӗрӗсем ҫителӗклӗ памалла, шкулсене, классене кирлӗ хатӗрсем илсе памалла. Нацисен издательствисене вырӑс мар шкул ачисем валли 5 миллион ытла учебник кӑларма хушнӑ. Вырӑнти промышленноҫпа аласти кооперацийӗн предприятийӗсене 1945 ҫулта 60 миллион карандаш, 180 миллион перо, сумкӑсем, чӗн пиҫххисем, портфельсем, ӗҫӗксем, линейкӑсем, готовальнӑсем, партӑсем, класс тускисем тата ыттисем те хатӗрлеме хушнӑ.

(ТАСС).

Колхоз пасарӗсенчи суту-илӳ

СССР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ колхоз пасарӗсене йӗркелесси тата вӗсен ӗҫӗсене лайӑхлатасси пирки постановлени йышӑннӑ. Вӑл постановленипе павильонсене, ларексемпе палаткӑсене, суту-илӳ сӗтелӗсене, гостиницӑсене, кӗрсе выртмалли ҫуртсене тата ыттисене те юсама тата ҫӗнӗрен тума палӑртса хунӑ. 1945 ҫулхи июлӗн 1-мӗшӗ тӗлне колхоз пасарӗсене халиччен вӗсен аллинче пулнӑ суту-илӳ, склад ҫурчӗсене тата ыттисене те каялла тавӑрса памалла. Край, область тата хула Совечӗсен исполкомӗсем пасарсене санитари енчен лайӑхлатмалла, пасарсем валли кирлӗ хатӗрсемпе оборуковани памалла.

Ҫулйӗр Халӑх Комиссариачӗпе юханшыв флочӗн Халӑх Комиссариатне чугун ҫул станцийӗсемпе пристаньсенче пасарсем тума участоксем уйӑрса пама хушнӑ. Вӑл участоксем перронсемпе пристаньсенчен 50 метртан инҫе пулмалла мар, пассажирсене пыма лайӑх пулмалла.

Ҫулйӗр Халӑх Комиссариатне ҫапла хушнӑ: хулана ҫывӑхран ҫӳрекен поездсенче ялхуҫалӑх ҫимӗҫӗсене 50 килограмм таран турттарса ҫӳреме ирӗк памалла. 16 килограмран иртекен ҫимӗҫсемшӗн вара багаж тарифӗ тӑрӑх укҫа тӳлеттермелле. Колхозниксене ҫавӑн пекех тата 50 килограмм таран ҫимӗҫ промышленность хулисемпе область центрӗсем хушшинче ҫӳрекен пассажирски поездсенче 150 — 200 километра ҫити турттарса кайма ирӗк параҫҫӗ. Ялхуҫалӑх ҫимӗҫӗсем илсе каякан колхозниксем валли кашни поездрах уйрӑм вагон пулать.

Хулари колхоз пасарӗсенче сӗтпе аш пахалӑхне контроллекен ҫӗнӗ станцисем уҫмалла.

(ТАСС).

Вырӑнти промышленность куллен кирлӗ таварсем ытларах тума пуҫлать

РСФСР ВЫРӐНТИ ПРОМЫШЛЕННОСТЬ ХАЛӐХ КОМИССАРӖПЕ В. П. СМИРЯЕВПА КАЛАҪНИ

Пирӗн ҫӗршыв мирлӗ аталану тапхӑрне кӗчӗ. Вырӑнти промышленноҫра ӗҫлекен работниксем умӗнче хисеплӗ те ответлӑ задача тӑрать, вӗсен куллен кирлӗ таварсем тӑвас ӗҫе сарса ямалла, тӗрлӗ йышши таварсем ытларах тумалла, ҫӗнӗ йышши таварсем тума пуҫламалла, продукцин пахалӑхне лайӑхлатмалла.

РСФСР-ти вырӑнти промышленность 500 ытла тӗрлӗ тавар туса кӑларать.

Вырӑнти промышленность куллен кирлӗ таварсем туса кӑларас ӗҫе 1944 ҫултах майӗпен ӳстерсе пынӑ. Хальхи вӑхӑтра Вырӑнти промышленность Халӑх Комиссариачӗн предприятийӗсем ҫав таварсене тӑвас ӗҫе сарса пыраҫҫӗ. Ҫав ӗҫре нимӗҫ оккупацийӗнчен ирӗке кӑларнӑ районсем чылай пысӑк вырӑн йышӑнчӗҫ. Унта районсенчи темиҫе ҫӗр фабрикӑпа мастерской ӗҫлеме пуҫланӑ ӗнтӗ. Кӑҫалхи виҫҫӗмӗш кварталта чугун савӑтсем пӗрремӗш кварталта туса кӑларнинчен ултӑ хут ытларах, сӗтел-пукансем — пӗрре ҫурӑ хут ытларах туса кӑлармалла. Мускавра, Ленинградра тата Мускав облаҫӗнче аллюминирен тӑвакан савӑтсем, Мускаври «Красный штамповщик» заводра—эмальпе витнӗ савӑтсем, чылай облаҫсенче—цинкпа витнӗ савӑтсем ҫӗнӗрен тума пуҫлаҫҫӗ. Мускавра, Ленинградра, Свердловскра, Горькире тата Дон ҫинчи Ростовра кроватьсем тума пуҫлаҫҫӗ. Ленинградра керосинкӑсем тӑвас ӗҫе организацилеҫҫӗ. Халӑх фарфортан тунӑ турилккесем, чашӑксем, куркасем чылай илнӗ ӗнтӗ. Апат ҫимелли тата чей ӗҫмелли хатӗрсем тӑвас ӗҫе те ҫӗнӗрен пуҫласа яраҫҫӗ. Готовальнӑсем, карандашсем, сӗтел ҫине лартмалли сехетсем, утюгсем тата ҫавӑн йышши ытти япаласем тӑвас ӗҫе сараҫҫӗ.

Музыка промышленноҫӗн предприятийӗсем халӗ хуткупӑссем, баянсем, духовой инструментсем, чӗпӗтсе каламалли инструментсем, пианинӑсем туса кӑларма пуҫланӑ.

Чи лайӑх йышши таварсем туса кӑларма май пултӑр тесе, вырӑнти промышленность тӑвакан япаласене общество организацийӗсем пӑхса тухаҫҫӗ. Ҫав ӗҫе пысӑк квалификациллӗ специалистсем, суту-илӳ организацийӗсен тата общество организацийӗсен представителӗсем хутшӑнаҫҫӗ.

Пирӗн пуринчен ытла вырӑнти промышленность валли квалификациллӗ рабочисем вӗрентсе хатӗрлеме тӑрӑшмалла. Пӗлтӗр ҫӗнӗрен 85.000 рабочи вӗрентсе хатӗрленӗччӗ. Кӑҫал ҫак ӗҫе тата ытларах сарса ямалла. Кӑҫал ФЗО шкулӗсем 10, художествӑпа ремесла училищисем 11 уҫаҫҫӗ. Рабочисене тата производствӑрах вӗрентеҫҫӗ.

Ҫак ӗҫсем куллен кирлӗ таварсене ҫӗнӗрен тума тытӑнас тата ҫав ӗҫе малалла сарас тӗлӗшпе вырӑнти промышленность работникӗсен тумалли пысӑк ӗҫӗн пуҫламӑшӗ ҫеҫ пулса тӑраҫҫӗ-ха. (ТАСС).

Ҫулйӗр строительствинчи ҫирӗмкунлӑх

ҪИРӖМКУНЛӐХ ИРТЕТ, ҪӖМӖРЛЕСЕМ ҪАПЛАХ ХУСКАЛМАҪҪӖ-ХА

ҪӖМӖРЛЕ. (Хамӑр корр.). Чӑваш АССР Совнаркомӗ панӑ план тӑрӑх, районӑн ҫулйӗр строительствин ҫирӗмкунлӑхӗнче 300 кубометр чул, 1880 кубометр хӑйӑр, 340 кубометр йывӑҫ хатӗрлесе турттармалла; ҫур километр тӑршшӗ шоссе ҫулӗ хывмалла, 12 километр тӑршшӗ ҫула юсамалла, 14 метр тӑршшӗ кӗпер тумалла, кӗперсене 85 метр тӑршшӗ юсамалла.

Ҫулйӗр строительствин ҫирӗмкунлӑхӗ иртет ӗнтӗ, анчах ҫӗмӗрлесем ҫулйӗр ӗҫне тытӑнманпа пӗрех, вӗсем ҫаплах хускалмаҫҫӗ-ха. Ҫӗмӗрлерен Калининкӑна каякан тракт ҫинче кӑна кив торцовкӑна 346 метр тӑршшӗ сӳтсе тухнӑ, 2.881 метр тӑршшӗ ҫула юсанӑ, 2381 метр тӑршшӗ ҫулӑн хӗррине лайӑхлатнӑ. Кунта Хутарти Ленин ячӗпе тӑракан колхоз членӗсем ӗҫлеҫҫӗ. «Комбайн», «Заря», «Майӑн 1-мӗшӗ», «Новая жизнь», «Самолет» колхозсем те ӗҫе хутшӑннӑ, анчах вӗсем питӗ сӳрӗк ӗҫлеҫҫӗ-ха. Калинин ячӗпе тӑракан, «Вперед», «Большевик», «Авангард» тата ытти колхозсем ӗҫе пачах та хутшӑнман.

Ҫӗмӗрлерен Пӑрачкава каякан тракт ҫинче ӗҫлеме ҫирӗплетнӗ колхозсем ӗҫе тытӑннӑ. Анчах кунта мӗн тунине районри ҫулйӗр пайӗ хӑй те пӗлмест, ӗҫ начар пырать. Кунта ӗҫлеме сахал тухаҫҫӗ.

Ҫӗмӗрлерен Етӗрнене каякан тракт ҫинче ӗҫлеме паянхи куна пӗр колхоз та тытӑнман. Ҫитес кунсенче тин тытӑнма шутлаҫҫӗ.

Ҫулйӗр строительствине районра чылай колхозсем хутшӑнман.

Е. ВОЛКОВ.

В. М. Молотов Итали посолне П. Кварони господина йышӑнни

Июнӗн 8-мӗшӗнче СССР Ют ҫӗршыв Ӗҫӗсен Халӑх Комиссарӗ В. М. Молотов Италин Чрезвычайнӑй тата Полномочнӑй Посолне П. Кварони господина йышӑннӑ. Йышӑну П. Кварони господин хӑйӗн верительнӑй грамотисене СССР Верховный Совет Президиумӗн Председательне парас шутпа пулса иртнӗ.

Арми генералне И. Е. Петрова Ленин орденӗпе „Ылттӑн Ҫӑлтӑр" медаль пани

СССР Верховный Совет Президиумӗн Председателӗн 1-мӗш Заместителӗ Н. М. Шверник юлташ арми генералне Иван Ефимович Петрова ӗнер Ленин орденӗпе «Ылттӑн Ҫӑлтӑр» медаль тата ӑна Совет Союзӗн Геройӗ ятне пани ҫинчен калакан грамота панӑ. Ӑна ҫак награҫӗсене нимӗҫ захватчикӗсене хирӗҫ пынӑ кӗрешӳ фронтӗнче Командовани панӑ боевой заданисене кӑтартуллӑн пурнӑҫа кӗртсе пынӑшӑн тата ҫавӑн чухне тунӑ ҫитӗнӳсемшӗн панӑ.

Докладчиксемпе агитаторсем валли

Чăваш республикинчи ялхуçалăхĕ 25 çул хушшинче

И. ШИРОВ,
Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссарĕ

Октябрьти социализмлă аслă революци, чăваш халăхне, ĕмĕрхи чуралăхран хăтарса, çĕнĕ, ирĕклĕ пурнăç çулĕ çине кăларчĕ. Совет влаçĕн çулĕсенче Чăваш республикинче шултăра промышленноçпа социализмлă ялхуçалăхĕ ÿссе çитĕнчĕ, формипе национальлĕ, содержанийĕпе социализмлă культура ÿсе чечекленчĕ.

Пирĕн ял çĕнелсе урăхланас çул çăмăл пулман. Çĕнĕ пурнăçăн кашни утăмне хаяр класс кĕрешĕвĕнче çĕнтерсе илмелле пулнă. Аслă та аслă Сталин юлташ ертсе пынипе пирĕн мухтавлă коммунистла партия халăх тăшманĕсене—кулаксемпе вĕсен юлашкийĕсене çапса аркатрĕ, ĕç хресченĕсене коллективлă хуçалăха пĕрлештерчĕ. Çĕршывра колхоз строй татăклăн çĕнтерчĕ. Чăваш республикинчи 1770 колхоз пĕтĕм хресчен хуçалăхĕсен 91,5 процентне пĕтĕçтерсе тăрать. Колхозсем республикăри акакан пĕтĕм çĕрĕн 98,5 процентне йышăнса тăраççĕ. 168 пине яхăн хресчен хуçалăхĕ колхозлă пурнăç çулĕ çине тăчĕ.

Совет халăхĕ фашистла нимĕç захватчикĕсене хирĕç туса пынă Отечественнăй аслă вăрçă социализмлă ялхуçалăхне хăвăр та пысăк тĕреслÿ витĕр кăларчĕ. Ак тĕреслеве колхоз стройĕпе пирĕн колхоз хресченĕсем чыслăн тÿссе ирттерчĕç. Колхоз хресченĕсем тăрăшса ĕçленине пула, Хĕрлĕ Çар вăрçăра апат-çимĕç çитменнине курмарĕ.

Ялта социализмлă ялхуçалăхĕн системи татăклăн çĕнтерни колхоз вăйĕн тата пулăхлăхĕн тĕп çăлкуçĕ пулса тăракан çĕрне ăнăçлăн усă курма пур условисене те туса пачĕ. Ĕç хресченĕсем колхозсене пĕрлешни республикăри акакан çĕр лаптăкне ÿстерме пулăшрĕ. Хальхи Чăваш республики вырнаçса тăракан территори çинче 1913 çулта, урăхла каласан, пĕтĕм тĕнчери пĕрремĕш вăрçăччен, 520,6 пин гектар акнă пулсан, 1944 çулта çав акакан çĕр лаптăкĕ 614,8 пин гектара çити е 18 процент чухлĕ ÿснĕ. Тĕштырă культурисем, уйрăмах тулă акасси анлăн сарăлчĕ. Техникăллă культурăсемпе пахча-çимĕçсем тата çĕрулми йышăнакан çĕр лаптăкĕ те чылай ÿсрĕ. Колхозсен уйхирĕнче техникăллă çĕнĕ культура — кок-сагыз ăнăçлăн сарăлса пырать.

Ялхуçалăхĕнчи ĕлĕкхипе хальхи тĕслĕхсене танлаштарса пăхсан, колхоз стройĕн вăйĕ уйрăмах усăмлăн курăнса тăрать. Çапла, сăмахран, хальхи Чăваш республикин территорийĕ çинче акакан çĕр лаптăкĕ пĕтĕм тĕнчери пĕрремĕш вăрçă пынă вăхăтра 100 пин гектар ытла чакнă. Акакан çĕр лаптăкĕ çавăн пек чакни унчухнехи ялхуçалăхĕнче вакă хресчен хуçалăхĕсем пулнинчен килнĕ.

Совет халăхĕ нимĕç захватчикĕсене хирĕç туса пынă вăрçă вăхăтĕнче вара, колхозсен вăйне пула, партипе правительство ялхуçалăхĕшĕн куллен тăрăшнине пула, эпир акакан çĕр лаптăкне вăрçăччензи хисеп чухлех сыхласа хăварма пултартăмăр, техникăллă культурăсемпе çĕрулми тата пахча-çимĕçсем акакан çĕр лаптăкне вара чылай аслăлатрăмăр. Чăваш республикинчи колхоз хресченĕсем, ку вăрçă вăхăтĕнче ялхуçалăхĕнчен ĕçлеме пултаракан çынсемпе туртăм вăйĕсене халиччензи вăрçăри пек мар ытларах илсе кайнă пулин те, çав çитĕнĕве тума пултарчĕç.

Кайра тăракан виçĕ пусăллă çĕрĕçĕ совет влаçĕн çулĕсенче аваллăха юлчĕ. Чăваш республикинчи мĕнпур колхозсем нумай пусăллă çĕрĕçĕ çине куçрĕç, çав пусăсенче халĕ ĕнтĕ курăк нумай акаççĕ. Революциччен çĕрĕçĕн тĕп хатĕрĕ йывăç сухапуçĕ пулнă пулсан, совет влаçĕ ĕçхресченне, уйрăмах вăл колхоза кĕрсен, пахa машинăсем пачĕ. Чăваш республикинчи ялхуçалăхĕ халĕ ĕнтĕ механизациленĕ шултăра хуçалăх пулса тăрать. Çак кунсенче 25 çул тултаракан республика уйхирĕсенче халĕ 29 машинăпа-тракторнăй станци, 1000 ытла трактор, 400 яхăн комбайн тата ытти нумай тĕрлĕ ялхуçалăх машинисем ĕçлеççĕ.

Машинăсемпе чĕрĕ туртăм вăйне, тракторпа лаша вăйне пĕтĕçтерсе ĕçлеттерни колхозсене уйхир ĕçĕсене чылай вĕскерех сроксенче те кал-каллăнрах туса ирттерме, вăйлă тырпул туса илме май парать.

Чăваш республикинчи ялхуçалăхĕнче агротехникăн чылай çĕнĕ мероприятийĕсене ĕçе кĕртнĕ. Ирхи таса çĕртме тăвасси, кĕрхи çĕртме тăвасси, тырпула машинăсемпе акасси, минераллă удобренисемпе усă курасси, сортлă вăрлăх тата вăрлăхсене яровизацилесе акасси, тырă калчисене апатлантарасси, вăрлăхсене тĕрлĕ имçамсемпе сиплесси тата ытти те анлăн пурнăçа кĕрсе пыраççĕ.

Колхозсем организациленнĕччен Чăваш республикинче тĕштырăсемпе çĕрулмин сортлă вăрлăхĕсем пачах та пулман. Колхозсем организацилесен, 1929 çултан пуçласа, пирĕн ĕçхресченĕсем сортлă вăрлăхсем акма тытăнаççĕ. Сталинла пилĕкçуллăхсем вăхăтĕнче Чăваш республикинчи колхозсем тĕштырăсен тĕп культурисене—ырашпа кĕрхи тулла, çурхи тулăпа урпана тата пăрса йышши культурăсене пĕтĕмĕшпе тенĕ пекех сортлă вăрлăхсемпе акма пуçларĕç. 1941 çулта пĕтĕм тĕштырă культурисенчен 73 процентне сортлă вăрлăхсемпе акнă пулнă. Вăрçă вăхăтĕнче сортлă вăрлăхсем акасси малалла ÿссе пычĕ. 1944 çулта пĕтĕм тĕштырă культурисенчен 79 процентне сортлă вăрлăхсемпе акнă. Вăрнарпа Вăрмар районĕсенче вара сортлă вăрлăхсемпе акнă тĕштырă культурисен хисепĕ 92—95 процента çити ÿснĕ.

Вакă, пĕччен хуçалăхран коллективлă хуçалăха куçни тата çав никĕс çинче çĕр ĕçне кĕртсе пынă пахa мероприятисем çак юлашки 15 çул хушшинче тĕштырă культурисен тухăçлăхне икĕ хут ÿстерме май пачĕç. Кашни 5-шер çул хушшинче тĕштырă культурисен тухăçлăхĕ вăтамран çакăн чухлĕ ÿссе пынă: 1925—29 çулсенче гектартан вăтам шутпа 6,25 центнер, 1930—34 çулсенче—9,12 центнер, 1935—39 çулсенче—11,28 центнер, 1940—44 çулсенче — 12,58 центнер тĕштырă туса илнĕ.

Чăваш республикинчи колхозсем çĕрулмин лартса тăвас ĕçре пысăк çитĕнÿсем турĕç. Революциччен хальхи Чăваш республикин территорийĕ çинче хресчен хуçалăхĕсем пĕтĕмпе 9.600 гектар çĕрулми лартнă пулнă. Колхозсем организацилесен, çĕрулми лартакан çĕр лаптăкĕ вăйлăн сарăлчĕ. Халĕ çĕрулмине кил вырăнĕсенче çеç мар, уйхирсенче те лартаççĕ.

Малтанхи çулсенчен пуçласах колхозсем сортлă çĕрулми лартма тытăнчĕç. 1930 çулта республикăна пысăк тухăçлă «Вольтман», «Силезия» тата ытти тĕрлĕ сортлă çĕрулмисем йышлăн кÿрсе килнĕ. Юлашки çулсенче Чăваш республикинчи колхозсенче çĕрулмин «Лорх» ятлă сорчĕ анлăн сарăлчĕ. 1945 çулта çав йышши çĕрулмине пĕтĕмпе 20 пин гектара çити лартса хăварнă.

Чăваш автономине тăваччен нумай районсенче пахча-çимĕç лартса тăвас ĕç пулманпа пĕрех; лартассăн та, пахча-çимĕçе кил вырăнĕсенче кăна лартнă. Пахча-çимĕçсенчен купăста, суханпа хăяр тĕп вырăн йышăнса тăнă, ытти тĕрлĕ çимĕçсем пулманпа пĕрех.

Юлашки çулсенче пахча-çимĕçсем лартакан çĕр лаптăкĕ пилĕк хут ытла ÿсрĕ. Пахча-çимĕçсен шутне çĕнĕ çимĕçсем: помидор, кавăн, арбуз, кольраби, редис, чеклĕ купăста тата ыттисем те хутшăнчĕç. 1928 çулта пахча-çимĕçсем 2.200 гектар чухлĕ лартнă пулсан, 1945 çулта вара пахча-çимĕçсем лартнă çĕр лаптăкĕ 6.400 гектара çити ÿсрĕ.

Чăваш автономине тунăранпа, чĕрĕк ĕмĕр хушшинче, сад-пахчисем лартнă çĕр лаптăкĕ виçĕ хут ытларах ÿсрĕ. 1920 çулта Чăваш республикинче сортлă çимĕç йывăççисем лартса ĕрчетекен пĕр питомник пулнă пулсан, 1940 çулта пирĕн 15 питомник пулнă. 1945 çулта çав питомниксем колхозсене пахa çимĕç йывăççисем 160 пин тĕп параççĕ. Республикăри сад-пахчисем 1940—41 çулсенчи сивĕпе нумай пĕтрĕç. Пĕтнĕ садсене çĕнĕрен чĕртес тата çĕнĕ садсем ĕрчетес тĕлĕшпе колхозсемпе колхозниксем юлашки çулсенче пысăк ĕçсем туса ирттерчĕç. 1943—1944 çулсенче 1300 гектар çинчи садсене çĕнĕрен чĕртнĕ. Колхозсен кил вырăнĕсенче юлашки 4 çул хушшинче 102 пин тĕпе яхăн çимĕç йывăççисем лартнă.

Пирĕн партипе совет правительстви колхозсенче обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç çине яланах тимлĕн пăхнă тата пăхаççĕ те. Партипе правительство йышăннă чылай постановленисем колхозсенчи выльăх-чĕрлĕхсен йышĕпе вĕсен тухăçлăхне ÿстерессишĕн кĕрешме колхозниксен активлăхне вăйлăн мобилизацилерĕç. 1945 çулхи майăн 1-мĕшĕ тĕлне шута илнĕ тăрăх, пирĕн республикăра таварлă сĕт-çу фермисем 1765 ферма, вĕсенче 85 пин пуç ĕне-выльăх пур; таварлă сурăх фермисем 1762 ферма, вĕсенче 171 пин пуç сурăхсемпе качакасем пур; таварлă сысна фермисем 1740 ферма, вĕсенче 76 пин пуç сысна пур. Республикăри 1735 колхозра кайăк-кĕшĕк фермисем пур, вĕсем тĕрлĕ кайăк-кĕшĕксем пурĕ 128,5 пин пуç тытаççĕ. Колхозсенче хурт-хăмăр, кролик тата пулă ĕрчетес ĕç анлăн сарăлса пырать.

Чăваш республикинчи колхозсенче тата колхозниксен килĕсенче таса ăратлă выльăх-чĕрлĕхсемпе кайăк-кĕшĕксем ĕрчетесси вăйланса пырать. Революциччен чăваш хресченĕ çавăн çинчен ĕмĕтленме те пултарайман. Чăваш колхозĕсем красногорбатовски тата симментальски ĕнесем, «Прекос-меринос» йышши вĕтĕ çăмлă сурăхсем ĕрчетеççĕ. Акăлчан ăратиллĕ шурă сыснасен йышĕ ÿссех пырать. Колхозсенчи кайăк-кĕшĕк фермисенче «Леггорн» ăратиллĕ шурă чăхсем йышлăн ÿсеççĕ.

Отечественнăй аслă вăрçăччен республикăри колхозсенче лашасен йышĕ те ÿссех пынă. Вăрçă çулĕсенче пирĕн колхозсем Хĕрлĕ Çарпа çĕршыв валли лайăх лашасем нумай пачĕç, çавăн пекех тата эпир нимĕç оккупацийĕнчен ирĕке кăларнă облаçсене те 2800 лаша парса пулăшнă.

Вĕтĕ йышши, вăйсăр лашасем вырăс ăратиллĕ тата вырăспа Америка ăратиллĕ лашасемпе, брабансон ăратиллĕ лашасемпе улшăнса пыраççĕ.

Совет халăхĕ нимĕç захватчикĕсене хирĕç туса пынă Отечественнăй аслă вăрçă çулĕсенче Чăваш республикинчи колхозницăсемпе колхозниксем, вăрçă йывăрлăхĕсене пăхмасăрах, колхоз уйхирĕсенче вăя хĕрхенмесĕр ĕçлерĕç, государство умĕнчи хăйсен пур обязательствисене те çулсерен чыслăн пурнăçа кĕртсе пычĕç, çапла вара Хĕрлĕ Çарпа Тăван çĕршыва апат-çимĕç, промышленноçа чĕртавар таттисыпписĕр парса тăчĕç.

Пирĕн колхозниксемпе колхозницăсем хăйсем чăн-чăн патриотсем пулнине кăтартса пачĕç. Вĕсем государство обязательствисене тултарса пынипе пĕрлех, 1943 çулта кăна государствăна 2,5 миллион пăт тĕштырă обязательствăсенчен ирттерсе сутрĕç, выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем 178 пин тенкĕлĕх ытла пачĕç, 3576 пуç чĕрĕ выльăхсем пачĕç. 1944 çулта планран ирттерсе Хĕрлĕ Çар фондне тĕштырăпа çĕрулми темиçе çĕршер пин пăт панă.

Совет влаçĕн çулĕсенче Чăваш республикинчи колхозсенче вăйлă тырпул туса илес ĕçĕн чаплă мастерĕсем ÿссе çитĕнчĕç. Çапла, сăмахран, Вăрнар районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхоз (председателĕ Васянин юлташ) 1944 çулта 617 гектар çинче кашни гектартан вăтам шутпа 22,41-шер центнер тĕштырă туса илнĕ. Çав колхозрах Миронова юлташăн бригади 163 гектар çинче кашни гектартан 23-шер центнер тĕштырă илнĕ. Вăрлăх участокĕсем çинчен çав колхоз кашни гектартан сĕлĕ 39-шар центнер, урпа 28-шар центнер, тулă 25-шер центнер туса илнĕ.

Шупашкар районĕнчи «Осоавиахим» колхоз, Советски районри «Сеятель» колхоз та вăйлă тырпул туса илнĕ. Кун пек тĕслĕхсене халĕ ĕнтĕ çĕрулмипе техникăллă культурăсем тата пахча-çимĕçсем туса илес тĕлĕшпе те вуншарăн та çĕршерĕн илсе кăтартма пулать.

Чăваш ялĕнче колхоз интеллигенцийĕн çĕнĕ кадрĕсем— комбайнерсемпе трактористсем, шоферсемпе механиксем ÿссе çитĕнчĕç. Революциччен чăваш хресченĕ ун пек профессисем çинчен ĕмĕтленме те пултарайман. Çĕршер трактористсемпе комбайнерсем, малта пыракан техникăна тĕплĕн вĕренсе алла илсе, колхоз уйхирĕсенче стахановла ĕçĕн пахa тĕслĕхĕсене кăтартса параççĕ.

Республикăри колхозсем кăçалхи çуракине хăвăрт та кал-каллăн, пысăк пахалăхлăн туса ирттерчĕç. Майăн 22-мĕшĕ тĕлне республикăри колхозсем ир акмалли тĕштырă культурисене акса пĕтерчĕç, июнĕн 1-мĕшĕ тĕлне вара пĕтĕм тĕштырăсене акса пĕтерчĕç. Трактор ĕçĕсен планне июнĕн 1-мĕшĕ тĕлне республикипе пурĕ 108 процент чухлĕ тултарнă. Фашистла Германие татăклăн çĕнтернипе хавхаланнă колхозниксемпе колхозницăсем, трактористсемпе трактористкăсем колхоз уйхирĕсенче вăя хĕрхенмесĕр ĕçлерĕç.

Вăйлă тырпулшăн кĕрешес ĕçĕн чи ответлă тапхăрĕ — тырпулсене пухса кĕртес ĕç тапхăрĕ çывхарса килет. Иккеленмелли çук: Чăваш республикинчи колхоз хресченĕсем, тăван республика 25 çул тултарас ятпа пуçланнă социализмлă ăмăртăва сарса пырса, тырпулсене пухса кĕртме вăхăтра та тĕплĕн хатĕрленсе çитĕç, тырпулсене лайăх пăхса çитĕнтерес ĕçе кирлĕ пек йĕркелĕç, 1945 çулта, мирлĕ ĕçĕн çĕнĕ условийĕсенче, халиччензхинчен татах та вăйлăрах тырпул туса илĕç.

Французсен „Норманди—Неман" ятлă авиаполкĕ Совет Союзĕнчен хăйсен тăван çĕршывне тухса каять

Европăра вăрçă пĕтнĕ май французсен «Норманди—Неман» ятлă истребительнăй-авиаполкĕ, Совет Союзĕпе Германи фронтĕнче гитлерла Германие хирĕç совет летчикĕсемпе пĕрле ăнăçлă кĕрешнĕскер, çитес кунсенче Франци тухса каять.

Верховнăй Главнокомандующи Совет Союзĕн Маршалĕ И. В. Сталин юлташ хушнă тăрăх, Совет Союзĕн парни шучĕпе тата совет халăхĕпе француз халăхĕ пĕр-пĕрипе туслăн пурăннине палăртас шутпа, çав авиаполка француз летчикĕсем Совет Союзĕпе Германи фронтĕнче хастарлăн та ăнăçлăн усă курнă самолетсемпе авиаци хĕçпăшалне параççĕ. (ТАСС).

Пĕрлешнĕ Нацисен Сан-Франциско хулинчи конференцийĕнче

Д. З. МАНУИЛЬСКИЙ ЮЛТАШ КАЛАНИ

САН-ФРАНЦИСКО, июнĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС спецкорĕ). 1-мĕш номер комиссин 1-мĕш комитечĕн председателĕ Д. З. Мануильский юлташ (вăл комитет умсăмах, тĕллевсем тата принцип ыйтăвĕсем тĕлĕшпе ĕçлет) пичет представителĕсене çапла каласа панă: эпĕ ертсе пыракан комитет, пĕрсаслă пулса, пĕтĕм тĕнчери çĕнĕ организаци ятне «Пĕрлешнĕ Нацисем» тесе йышăнмалла турĕ. Канашлура пулнисем çак сĕнĕве алă çупсах йышăнчĕç, тенĕ.

Мануильский юлташ каланă тăрăх, ертсе пыракан комитет хушнă тăрăх, 1-мĕш комитет çав организацие мĕнле ят парасси çинчен сÿтсе-явнă. Латинла Америка представителĕсем тĕрлĕ ят йышăнма сĕннĕ: сăмахран, «Нацисен ассоциацийĕ», «Нацисен союзĕ», «Нацисен пĕрлешĕвĕ» тата ытти те. Çакăн пек ятсем сĕннисем «Пĕрлешнĕ Нацисем» текен термина тĕрлĕ чĕлхесем çине куçарма йывăрри çинчен каланă. Кунсăр пуçне çакăн пек ята вĕсем акă мĕншĕн хирĕç пулнă: «Пĕрлешнĕ Нацисем» термин вăрçăпа çыхăнса тăрать. Вăл ят малашне организацие çĕнĕ членсем илессине чăрмантарма пултарать, тенĕ (кунта вĕсем малашне нейтральнăй е тăшманла государствăсене илессине шутра тытнă пулас). Анчах та Украинăпа Франци делегацийĕсем США делегацийĕ сĕннине ырланă. Украина делегацийĕ çакна асăрхаттарса хăварнă: «Пĕрлешнĕ Нацисем» тесе калама чи малтан Рузвельт сĕннĕ. Çавăн пирки те вăл ята, государствăн аслă деятелĕн ятне хисеплесе, çаплипех хăвармалла.

Мануильский юлташ каланă тăрăх, Украина делегацийĕ çапла шутлать: «Пĕрлешнĕ Нацисем» тенĕ термин сĕннĕ принципсемшĕн пыракан кĕрешÿпе çыхăнса тăнă. Пулас организаци те çав принципсемшĕнех кĕрешмелле. Мануильский юлташ палăртнă тăрăх, «Пĕрлешнĕ Нацисем» тесе ят парассине хирĕç тăракансем çапла каланă: малашне хирĕçÿсем сиксе тухас пулсан, çак ят килĕшÿллĕ пулмасть, тенĕ. Анчах та Украина делегацийĕ çапла шутлать: хальхи вăхăтра çавăн пек хирĕçÿсем тухасси çинчен шутлама кирлĕ мар. Мире сыхласа тăрас тĕлĕшпе аслă державăсем хушшинчи пĕрлĕх чи шанчăклă май пулса тăрать, тенĕ. Мануильский юлташ калашле, çак сăлтава пула Украинăпа Совет Союзĕн делегацийĕсем конференци йышăннă йĕркене çирĕп тытса пымалла тесе шутлаççĕ: вĕсем устава çирĕппĕн пăхăнса тăма кирлĕ тесе шутлаççĕ. Мануильский юлташ çапла пĕлтернĕ: комитет ларăвĕнче Франци делегачĕ сăмах тухса каларĕ. Вăл çав организацие «Пĕрлешнĕ Нацисем» ят парасси майлă каларĕ, тенĕ. Çакăн хыççăн вара ытти сĕнÿсене каялла илнĕ те, асăннă ята алă çупса, пурте пĕрсаслăн йышăннă.

ФРАНЦИ СИРИПЕ ТАТА ЛИВАНПА ХИРĔÇНИ ÇИНЧЕН

САН-ФРАНЦИСКО, июнĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС спецкорĕ). Пĕрлешнĕ нацисен конференцийĕнче Франци делегацийĕ кăларса тăракан «Франс Джорнэл» ятлă официальнăй бюллетень июнĕн 5-мĕшĕнче ирхине статья пичетлесе кăларнă. Вăл статьяра Сывăхри Хĕвелтухăç ыйтăвĕсем пирки пĕтĕм тĕнчери конференцие пухасси çинчен де Голль сĕннине ырланă. Статьяра çакна палăртнă: çав конференцие Совет Союзĕ те хутшăнмалла, конференцин араб тĕнчипе çыхăнса тăракан пур ыйтусене те сÿтсе-явмалла, тенĕ.

Статьяра каланă тăрăх, Левантри пăлхавçăсем Франци тапăнма хĕтĕртсе тăнă, мĕншĕн тесен вĕсем «Акăлчан хăватлă вăйĕсем сахалтан та никам майлă та пулмĕç тесе шанса тăнă».

ÇУРÇĔР ИТАЛИРИ ЛАРУ-ТĂРУ

РИМ, июнĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС): Союзниксен 4-мĕш корпусĕн командующийĕ Гриттенбергер генерал июнĕн 6-мĕшĕнче Итали партизанĕсене чĕнсе прокламаци кăларнă. Прокламацире çакна асăрхаттарнă: 1944 çулхи декабрь уйăхĕнче союзниксен командованийĕпе Çурçĕр Италири Ирĕклĕх Комитечĕ тунă килĕшĕвĕн условийĕсем тăрăх, Çурçĕр Италие оккупантсенчен ирĕке кăларнă хыççăнах Ирĕклĕх Комитечĕ хăйĕн полномочийĕсене союзниксен çар администрацийĕ (АМГОТ) аллине памалла пулнă. Прокламацире çакна та асăрхаттарнă: партизансем хĕçпăшала тавăрса памалли вăхăт июнĕн 7-мĕшĕнче тухать. Хĕçпăшалсăрланмалли çинчен калакан приказа ку таранччен пурнăçа кĕртменнисен вăл ĕçе çав срокчен тумалла, тенĕ.

АЛБАНИРЕ

БЕЛГРАД, июнĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Албанин телеграф агентстви çапла пĕлтерет: июнĕн 2-мĕшĕнче Албани премьер-министрĕ Энвер Ходжа Совет Союзĕн çар миссийĕн начальникне Соколов полковника йышăннă. Соколов полковникпа пĕрле çар миссийĕн ытти членĕсем те пулнă. Агентство пĕлтернĕ тăрăх, калаçу туслă обстановкăра пулса иртнĕ.

БЕЛГРАД, июнĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). «Башкими» хаçат çапла пĕлтернĕ: Албани столицине Тирана хулине союзниксен çар миссийĕсем пынă хыççăн союзниксен аслă держависен правительствисем Албанири лару-тăрăва тĕплĕрех пĕлме пултараççĕ. Çĕнĕ Албанин лару-тăрăвĕ пĕрмаях çирĕпленсе пырассине шанса, хаçат юлашкинчен çапла çырать:

«Пирĕн позицисем çирĕпленсе пынăçемĕн пирĕн демократиллĕ правительствăна демократиллĕ союзниксем йышăнĕç, тесе эпир шанса тăратпăр. Албанипе Албани халăхĕн чăн-чăн лару-тăрăвĕпе паллашнă хыççăн Тито, маршал ертсе пыракан Югослави те, пирĕн кĕрешĕве çывăх тăраканскер, çавăн пекех тунăччĕ».

МАЙДАНЕКРИ ВИЛĔМ ЛАГЕРĔН НАЧАЛЬНИКНЕ ТЫТНĂ

ВАРШАВА, июнĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Варшавăри радио çапла пĕлтерет: Польша республикин хăрушсăрлăх органĕсем Майданекри вилĕм лагерĕн начальникĕ пулнă Пауль Гоффмана тупса тытса хупнă.

КĔСКЕН

▲ Геринг хыççăн нимĕçсен сывлăш çар вăйĕсен командующийĕ пулса ĕçленĕ генерал Риттер фон Грейм хăйне хăй вилнĕ.

▲ Венецуэла столицинче Каракас хулинче официальнăй йĕркепе çакăн çинчен пĕлтернĕ: Венецуэлăри нефть промыслисенче тата союзниксен танкерĕсем çинче вунă нимĕç взрывсем тума хăтланнă. Вĕсене вуннăшне те тытса хупнă.

▲ Швейцарин федеральнăй совечĕ Бернра Гитлерăн посланникĕ пулса ĕçленĕ Отто Кехера Швейцарире пурăнма ирĕк панă.

Аркадий Эсхель

Республика çулĕ

Аслă Сталина халалласа çырнă поэма

Аслă çулпуçăмăр, Сталин аттемĕр,
Санăн яту хĕвелтен çутăрах.
Çав çутăри халăхсем ĕмĕр-ĕмĕр
Чаплăн мухтавлĕç сана юрăра.

Эсĕ пире пĕрлештертĕн тăванăн—
Пур халăха пĕр телейлĕ йыша.
Эсĕ сÿнми хĕвел ырлăхĕ патăн
Ĕмĕр хĕн курнă ĕçчен чăваша.

Аслă та ирĕклĕ Атăл çыранĕ
Сан чупупа ăшăнса савăнать.
Халăхăн Атăл пек пысăк саламĕ
Санпăлан паян сăвăра шăранать.

Эсĕ пире аслă çул усса патăн,
Эсĕ малтан малалла йыхăран.
Пысăк салам сана, пирĕн хăватăмăр,
Çĕр пек, хĕвел пек салам халăхран.

Пур чечексем хĕвеле пуç таяççĕ,
Сут хĕвелпе пĕр майлах çаврăнаççĕ.
Сан енелле çавăн пек пуç тайса
Юрă юрлатпăр сана мухтаса.

Пур çăлтăрсем çĕрелле куç хываççĕ,
Пĕтĕм çĕрне пĕр çулпа çаврăнаççĕ.
Сан çинелле çавăн пек куç хывса,
Юрă юрлатпăр сана чысласа.

* * *

Тăван çĕршыв тăшмансене çĕнтерчĕ,
Татах хаваслă ĕç юрри кĕрлет.
Чăваш çĕршывĕн юбилейĕ киличе
Пур халăх çĕнтерĕвĕпе пĕрле.

Эпир мăнаçлăн уява тухатпăр.
Аслă уяв халь пирĕн урамра.
Кăкăр тулли, чĕре тулли юрлатпăр
Çак ирĕклĕ çурхи юррăмăра.

Халăхпала кĕрекене ларатпăр,
Сана чĕнетпĕр, пирĕн хаклă тус!
Мухтав курки те тав курки
йăтатпăр,
Пĕрремĕшне—сан сывлăхшăн, çулпуç!

Паян уяв. Республика тултарчĕ,
Ÿссе çитсе, шăп çирĕм пилĕк çул.
Вăл чăпкă çулпала утса хăпарчĕ,
Ун уттинче пĕр кукăр йĕр те çук

Эсир кăтартнă çулпала вăл утрĕ—
Чи тĕрĕс Ленин—Сталин çулĕпе.
Сирĕн ялавăра вăл çирĕп тытрĕ,
Мухтавлă ашшĕн тÿрĕ ывăлĕ пек

Сут тĕнчери пур ирĕклĕ çынсемшĕн
Чĕре пек туйăнать тăван Мускав.
Историри чи аслă çĕнтерÿшĕн
Мухтав сана, çулпуçăмăр, мухтав!

* * *

Аваллăх çапĕ—паттăр Улăп
Кĕрешнĕ ырăшăн хăюллăн,
Ялан çĕнтерлĕ усала,
Ялан вăл утнă малалла.
Вăл халăхшăн хĕвел шыранă,
Вăл пынă чăнлăх йĕрĕпе.
Вăл çивĕчĕ хурçă хĕç шăратнă
Хăйĕн чĕре кăварĕпе.
Çав тÿр чĕреллĕ Улăп-паттăр
Чапне эпир чысра усратпăр.
Эпир — ун тивĕç йăхĕсем,
Ун хăватне йышăннисем.
Иртнĕ кунсул çине пăхатпăр
Паянхи кун çÿллĕшĕнчен.
Мĕн авалтан эпир пурнатпăр
Тăван Россия варринче.
Тăван çĕршыв тесе чыслатпăр
Ăна пур халăх чĕринче
Çичĕ ютран килсе тухсассăн
Çĕршыв çине хурах-тăшман.
Эпир ун пек чухне нихçан та
Ютсем пек аякра тăман.
Тăван Россиямăр тăшманĕ—
Вăл пулнă пирĕншĕн тăшман
Тус-вырăс халăхĕ тăванăн
Чĕнсен çĕршывшăн çапăçма,
Улăп хĕçне эпир хăйранă
Юта пĕр шелсĕр аркатма.
Мухтавлă вырăс — аслă халăх,
Хĕвел пекех вăл хăй тавра
Пуçтарчĕ ĕмĕр пурăнмалăх
Çĕклерĕ ĕмĕр сарăкмалăх
Пур халăха пĕр çĕршывра
Çак туслăх авалтан çуралнă
Истори вутĕнче туптаннă,
Вăл ĕмĕр-ĕмĕрех упраннă,
Вăл çитнĕ паянхи куна.
Никам та хуçас çук ăна.

* * *

Анчах пире Октябрĕччен кышланă
Çыннисен усал тăшманĕ—
Патшапала карам-пырсем,
Улпутсемпе мул куçисем.
Пĕр-пĕрипе пире вăрçтарнă
Чунилнисем, юпеçенсем
Вунпĕ пуçлă çав çĕленĕн
Пуçĕсене касса татма.
Пусмăрлăха çапса ватма
Эпир татах пĕрле çĕкленнĕ.
Хăпарнă Разин Атăл тăрăх,
Кĕрленĕ Пугачев килсе.
Пур халăха хускатнă:—тăрăр,
Вăранăр, паттăр, тăвансем!
Хумханнă, тăвăллăн, хăватлăн
Мăнаçлă Атăл хумĕсем.
Ун чух та хăйсене кăтартнă
Чăвашăн паттăр ывлĕсем.
Анчах çапах та аслă пĕрлĕх
Çав вăхăтра пирĕн пулман.
Кĕрешÿре вăл пĕрлĕх кирлĕ,
Ахаллĕн çĕнтерет тăшман.
Ак илтĕнет хăюллă сасă,
Ту ăмăрткайăкĕн сасси:
— Рабочисен хăватлă класĕ,
Санра — Российăн пуласси!
Çапла каларĕ аслă Ленин.
Эс патăн Кавказран ответ:
— Рабочи класс часах çĕкленĕ,
Паян вăл тăвăл çеç кĕтет!
Çапла ак икĕ ăмăрткайăк:
Пĕри — Россия варринчен,
Тепри Кавказ тăвĕсенчен
Çĕкленчĕç вăйлă çиçĕм майлă.
Вăранчĕ авалхи Россия,
Хускалчĕç паттăр халăхсем.
Вĕçĕ-хĕррисĕр çĕршыв сийĕн
Çил-тăвăл кайрĕ кĕрлесе
Вăл тухрĕ, халăхсен хĕвелĕ.
Октябрь сапрĕ çут хĕлхем.
Ĕмĕрлĕхе ĕнтĕ телейлĕ
Нумай хĕн курнă халăхсем
Эпир çав куншăн тав тăватпăр
Хĕвел пек аслă Ленина.
Эпир çав куншăн тав тăватпăр
Тăван çулпуçăмăр, сана!
Эпир çав куншăн тав тăватпăр
Тусcемĕр-большевиксене
Мĕнпур чун-чĕререн ырлатпăр
Пире çул уçнă партине.
Тăван пек тăвана чыслатпăр
Рабочисен паттăр классне.
Ĕмĕрлĕхе ырă сунатпăр
Чи çывăх вырăс халăхне.
Вĕсем чуралăхран хăтарчĕç,
Телейлĕ çул çине кăларчĕç,
Тăван пек пулăшрĕç пире
Кĕмешкĕн çĕнĕ ĕмĕре.

Анчах та çамрăк совет влаçĕн
Тÿсме тÿр килчĕ сахал мар.
Чĕр юншăн сăхă буржуази
Çĕклерĕ хирĕç вут-кăвар,
Хĕвеллĕ самана тăшманĕ
Тин ирĕк тупнă халăха
Хĕçпе, вутпа чикме шутланă
Калла, тискер чуралăха.
Шур банда вăркăнчĕ пуçхĕрлĕ,—
Шăпи те унăн çав кăна.
Кĕрешÿра туптаннă пĕрлĕх
Татах çĕнтерчĕ тăшмана.
Чапаев—чаплă халăх ывлĕ
Çуралнă пирĕн тăврара,
Кĕрешнĕ вăл мĕнпур çĕршывшăн,
Çĕршыв манмасть çав паттăра.
Ак, Иванов, ун ячĕ ылттăн,
Сивашпăн çапăçнă вăл хыттăн.
Вут-хĕм сÿнсен те кăкрине
Вăл çирĕм çул çĕрмесĕр выртнă
Сиваш тăсăрĕ ăшĕнче.
Çулпуçăмăр, эсир манмарăр,
Эсир-çке, Ленинпа пĕрле,
Пире чи йывăр чух ал патăр
Утма телей çулĕпеле.
Пирĕн çула çутатса тăчĕ
Ленинпа Сталин аслă ăсĕ.
Çав çут хĕвел çутатнă чух
Эпир чуралăх курас çук

(Малалли пулать).

Ответлă редактор С. Я. ЯКОВЛЕВ

ШУПАШКАРТИ КИНОТЕАТР
июнĕн 9-мĕшĕнчен пуçласа
кашни кунах
сасăллă, илемлĕ çĕнĕ фильм
«ЧЕЛОВЕК № 217»
кăтартать.
Сеанссем 12, 14, 16, 18, 20, 22 сехетре пуçланаççĕ.
Билетсене малтанах илсе хума юрать.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 9—67, заместителĕн — 2—40, секретарĕн — 1—23, парти пайĕн; вăл 3—97, промышленноçпа пайĕн — 3—99, культура пайĕн — 2—50, ... — 1—23

НТ 00512